Вулакан пулăшăвĕпе канăçсăрлантаракан çивĕч ыйтăва хускататпăр: хуравне тупайăпăр-ши?

# Çĕр-аннемĕре хисеплесчĕ, малашлăх пирки шутласчĕ



Хуçалăхăн экономикине çĕклеме пулăшнă сарайăн стени таçта кайса кĕнĕ... Паян евроçуртсем тăвакан ял çыннине намăс мар-и çакнашкал ӳкерчĕкшĕн?



Килте арçын çук пулсан тата куллен пăта çапмасан çапла пулса тухать те.



Бетон çивиттие те йывăр çав хуçа çук пулсан. Мĕн шутлать-ши çакна куракан?

Кунсем хăвăрт иртеççĕ. Кăçалхи çанталăк условийĕсем те пирĕн ене çурхи ака-сухана ытти çулхисенчен самай маларах çитерчĕç. Чылай хуçалăхсем акана ăнăçлă вĕçлерĕç. Вĕсен пуссисенче тыррă-пулă ăнса пулни, вăл сумлă чӳхенсе ларни, çав хуçалăхсемех вырмана ăнăçлă та вăхăтра тухни, малтанхи гектарсенчи тухăç пире савăнтарать кăна. Вĕсем мал ĕмĕтпе ĕçлесе çĕнĕ техника туянни ял хуçалăхĕ тĕппипех пĕтменнине кăтартать. Пур-ха юратнă Çĕр-аннемĕр çинче тулли вăйпа ĕçлеме пултаракансем, наука аталанăвне çĕр ĕç практикинче пурнăçа кĕртекенсем. Мĕншĕн вĕсене анлăрах çул парас мар-ха? Ахальлĕн пĕрисем ăнăçлă та малтуртăмлă ĕçленĕ вăхăтрах çĕр ĕçĕ çине алă сулакансем те çук мар-ха. Вĕсен «тăрăшуллăхне» пулах унччен тулли пучахпа чӳхеннĕ хресчен çĕрĕсем çум айне пулаççĕ, ĕнерен талăксерен 10-15 килограмм сĕт илнĕ, самăртма хупнă выльăхсем талăксерен çуршар килограмм ӳт хушнă фермăсем хупăнса ишĕлеççĕ, выльăх пăхакансен сукмакĕсем çинче вĕлтĕрен кашласа ӳсет. Çаксене курсан çĕр ĕçĕнче ĕмĕрленĕ хресченĕн чунĕ ыратмасăр чăтаймасть.

Чăваш телевиденийĕпе Олег Прокопьев паракан кăларăмсене ир тăрсан та, каçхине те итлеме питĕ кăмăллă. Акă, кăçалхи мартăн 17-мĕшĕнче каçхине тата тепĕр кунне ирхине пулнă кăларăмсене пăхсан-итлесен камăн чунĕ савăнмарĕ пуль! Унта Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров Чăваш Енри «уçман çеремсем» пирки уççăн калани Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн Аслă вăрçăра юн юхтарнисемшĕн мĕн чухлĕ хаклă передача шутланчĕ пуль. Вăрçă хирĕсенче пирĕн салтаксем тăван çĕрĕн кашни утăмĕшĕн юн тăкнă вĕт-ха. Халĕ вара вăл çĕрсем çум айне пулни тĕрĕс-и? Президентпа килĕшетĕп – тĕрĕс мар. Пирĕн Юнкă çĕрĕ 10-15 çул ĕнтĕ «тăрăшсах» çум курăк ӳстерет. Ун çинче кăшт ĕлĕкхи пек хăçан тулăх тыр-пул кашласа ларĕ-ши? Ял çыннисен кăмăлне çĕклесе тулли пучахлă хир урлă хăçан «хир карапĕ» иртĕ-ши? 15-17 çул каялла çак хирсенче вăй хунă хресченсем паян тивĕçлĕ канура. Çамрăкĕсен вара ĕçлес кăмăл иккĕмĕш вырăнта. Вĕсен эрех-сăра ĕçес те, вăрласçаратас туйăмсем малта тăраççĕ. Халăх сăнавĕсем, вĕсене пăхса ĕçлесси нивушлĕ манăçа тухрĕç? Ĕненс килмест.

Халăхра çапла калани пур: «Пуянлăхпа мул ĕмĕре пыракан япаласем мар». Пурлăха темĕнле кĕске хушăра та çухатма пулать: е вăрлаççĕ ăна, е çĕр çывăрмасăр тунă пурлăх ирĕке кайнă вут-çулăмра кĕлленет, е шыва каять. Этемĕн чун пуянлăхĕ, чун илемлĕхĕ, çыннăн ĕçлеслĕхĕ шывра та путмасть, пушарта та çунмасть. Вĕсене упраса хăварса малалла аталантарни ӳсĕм çулĕпе утма пулăшать. Çавăнпа мар-и çамрăксене ват асаттесем хăйсем каланине-сăнанине упрама сĕннĕ, ĕçлеслĕхе тата ăнланупа килĕшӳллĕхе аталантарма ыйтнă. Юлашки çулсенче ваттисем хушни-сăнани çине çамрăксем алă сулчĕçех курăнать çав. Мĕнле ултав кĕрсе вырнаçрĕ ĕмĕртен туслă пурăннă ĕçчен халăхăмăр чĕрине, мĕнле тискерлĕх? Мĕнле чир вăл? Унран паянхи çамрăксене мĕнле сыватмаллине кам калама пултарĕ? Эпир çитĕнтермерĕмĕр-и-ха вĕсене? Çывăрнă çĕртен вăратмасăр хĕрхенсе хамăр çеç ĕçлени, ачамăрсене ачаллах пур ĕçсене те хăнăхтарманни, вĕсем пирĕн нушана ан курччăр



Ку чӳречерен «АПКна аталантарсасси» приоритетлă наци проекчĕ мар, çил кăна пĕр чăрмавсăр кĕрет. Çав çил вылявĕ пирĕн пуççене те çитрĕ-ши?

тесе хĕрхенни çитермерĕ-и-ха паянхи лару-тăрăва?

Пире ӳстернĕ вăхăтра унашкал хĕрхенӳ пулман-çке. Хресчен хăйĕн ачине çăва тухсан хăйĕнпе пĕрле хĕвел тухиччене ура çине тăратнă, малтан пӳртри ĕççене хăнăхтарнă, алла кĕрепле тытма пуçласан утă тавăрма илсе çӳренĕ, тырă пиççе çитсен ачасем ашшĕ-амăшĕнчен юлмасăр çурлапа тырă вырнă, арçын ачасем лашапа ĕçлеме хăнăхнă, ĕçре ĕшеннĕ çамрăксем уявсенче аслисемпе пĕрле савăннă. Паян халăхăмăрăн çак ырă ăсĕ хыçала юлчĕ пулас. Çавăнпах таврара сухаламан çĕрсем те йышланса кайрĕç. «Уçман çеремсем» кашнин пахчи хыçнех çитрĕç. Вуншар çул «ĕçлемесĕр» выртнă çĕрсене сухаласа аксан вĕсем çинче паян вăйлă тыр-пул ӳсмелле. Çапла пуласса шанас килет те.

Чăваш Республикин Президенчĕн Н. Федоровăн пуçарăвĕ пурнăçа кĕрсен питех те аван пулмаллаччĕ. Ун чухне тин çум кашлакан хирсем çак таса марлăхран тасаласса, унччен выльăхпа тулли пулнă фермăсем çум айĕнчен тухасса, ишĕлчĕкрен çĕнелсе тăрасса, мехпарксенче хăватлă трактор-машинăсем çум хыçĕнчен пăхса ларнине манасса шанма пулать. Çавăн чух пирĕн Юнкă çĕрĕ çинче те гектартан 30-шан центнер тухăç паракан тырă кашласа ларĕ. Кĕтсе илĕпĕр-ши çак кунсене?..



Сăмахпа калама сăмах çук... Кирлĕ-ши ĕнтĕ ку хатĕр е? АПКна аталантарасси çакăнтан пуçланать-ши? Апла-и, капла-и, анчах кунта пĕр выльăх та тăмасть.



Сарайĕнче никам та çук, пурте «фронта кайнă...»



Пăшалпа пемесĕр, вутпа çунтармасăр пĕтрĕмĕр те, пушар хуралĕ кирлех-ши?

**И. ВАСЮХИН, ĕçпе вăрçă ветеранĕ.**

Юнкăпуç ялĕ.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем**

***(Автортан асăрхаттарса: сăн ӳкерчĕксене Юнкă тăрăхĕнче туман. Анчах ăçта пур кун пекки? Тăван енĕн малашлăхне шанакан, юхăнчăк туртăмĕпе кĕрешекен вулавçăсене уçă калаçăва чĕнетĕп).***

**РЕДАКЦИРЕН: Юлашки вăхăтра Юнкă тăрăхĕнче те «уçман çеремсене» акса-лартма пуçларĕç. Çак пуçару вăй илсе Юнкă тăрăхĕсене чăннипех савăнăç кӳме пуçлĕ-ши? Шанас килет.**

Шкулсенчен килекен хыпарсем

## «Родина» клубăн Раççейри ӳсĕмĕ

Муркашри вăтам шкулта ачасен «Родина» çарпа питриотика клубĕ йĕркеленнĕренпе пĕр-икĕ кун çеç иртмерĕ. Çак хушăра кунта çӳрекен ачасем хăйсен пултарулăхне районта çеç мар, республикăра та аван кăтартрĕç. Кунти ӳсĕмсемпе Раççей шайне тухма тивĕçнĕскерсем июлĕн 21–28-мĕшĕсенче Рязаньре иртнĕ пĕтĕм Раççейри «Победа» çарпа спорт вăййисен финалне хутшăнчĕç. Вăйăсем Арми генералĕ В.Ф. Маргелов ячĕпе хисепленекен сывлăш-çар десанчĕн команда училищинче иртрĕç. Каламалла, финал программи вырăнсенчи «Зарница» тата «Орленок» вăйăсеннинчен палăрмаллах уйрăлса тăнăран пирĕн юнармеецсен стройпа утас конкурссăр пуçне йăлтах çийĕнчех алла илсе судьясене пысăк пахалăхпа кăтартма тиврĕ.

Сывлăш-çар десанчĕн пурнăçне ачасем училищĕре пулнă пĕрремĕш минутранах лайăх туйса илчĕç. Тасалăх та йĕркелĕх, дисциплина, камуфляж çар форми, сенкер беретсем... Малтанхи кунсенче чăнчăн казармăсенче пурăннă ачасем юлашки 3 кунне çар училищин Рязань çывăхĕнчи «Стрельцы» вĕрентӳ центрĕнче палаткăсенче ирттерчĕç. Кашни кун ачасемшĕн тĕрлĕ мероприятисемпе тулăх та пуян пулчĕ. Пирĕн ачасем В. Г. Львов вĕрентнипе, И. В. Семенов тренер тата Д. Плечов командир ертсе пынипе Тăван çĕр-шывăн историне, Совет Союзĕпе Раççей Геройĕсене пĕлнипе, автоматран пересссипе, танксем çине граната ывăтассипе, палăртнă объектсене алла илессипе, шлюпкăсемпе шыв урлă каçассипе, çапăçу хирĕнче пĕрремĕш пулăшу парассипе, минăсем тупассипе ăмăртрĕç, çав вăхăтрах чăн-чăн çар апачĕпе апатланса пурăнчĕç.

Муркашсем Пĕтĕм Раççей шайĕнчи çакнашкал ăмăртусенче пĕрремĕш хут пулнине пăхмасăрах хăйсене тивĕçлипе кăтартма пултарчĕç. Тĕрлĕ конкурссенче призлă вырăна тухма та пултарнăскерсем 42 команда хушшинче 12-мĕш вырăн йышăнчĕç. Уйрăммăн илсен, туризма халалланă конкурсра Муркаш ачисен «Родина» çарпа патриотика клубĕ 1-мĕш вырăна тухрĕ. Граната ывăтассипе – 3-мĕш вырăн, пĕрремĕш медицина пулăшăвĕ парассипе – 2-мĕш, çапăçу хирĕнче куçса çӳрессипе – 2-мĕш, магазина патронсем тултарассипе – 4-мĕш вырăнсем йышăнни те пирĕн ачасен тăрăшуллăхне кăтартрĕ. Абсолютлă чемпион ята «Родина» ачисем Калашников автоматĕнчен 100 метра пересссипе тивĕç пулчĕç. Пирĕн командăри чи çамрăк участник Александр Евстафьев Раççейĕпе те чи тĕл перекенни ята тивĕçрĕ: 100 очкоран 95 очко илсе пĕрремĕш вырăна тухрĕ.

35 километр тăршшĕ тата 16 конкурсран тăракан «Малалла, юнармеецсем!» тактика вăййинче те пирĕн команда 4-мĕш степеньлĕ диплома (наградăна тивĕçекен 6 вырăнтан) тивĕçрĕ. Кунпа пĕрлех «Родина» çарпа патриотизм клубĕ «Туслăх кăвайчĕ» конкурс дипломанчĕ те пулчĕ.

Сакăр кун пĕрре куç хупса иличчен тенĕ пек – пĕрремĕш хут парашютпа сикнĕ чухнехи евĕр – иртсе кайрĕ. «Родина» çарпа патриотизм клубне çӳрекен тата асăннă конкурса хутшăннă 7 ачана Рязаньри В. Маргелов ячĕллĕ аслă сывлăшçар десанчĕн команда училищине çăмăллатнă йĕркепе вĕренме кĕме училище пуçлăхĕн В. Луговойăн рекомендаци çырăвне пани ачасемшĕн пурнан пурнăçра пĕлтерĕшлĕ пуласса шанатпăр.

**А. ПЕТРОВ.**

Вăрманçă аса илтерет

## Тимлĕхе çухатас марччĕ

Вăхăт кĕр еннелле кайрĕ пулин те, шăрăх çу кунĕсем хыçала юлма васкамаççĕха. 30-35 градус шăрăх тăракан çанталăк кашнин умнех хăрушлăх кăларса тăрататать. Уйрăм хăрушлăх вăл –ПУШАР. Çакна асра тытса паян кашнийĕнех тимлĕхе вуншар хут ӳстермелле, асăрханулăх пирки юлташсене те, ытти çынсене те асăрхаттарсах тăмалла. Ахальлĕн...

Манăн паяхни сăмах вăрманти пушар хăрушсăрлăхĕ пирки. Шăрăх çанталăка пула курăксем типсе кайрĕç, йывăç çулçисем тăкăнма пуçларĕç, вăрманта выртакан вутă-шанкă та типсе кайрĕ. Çак вăхăтра вара ялхула çыннисем вăрмана кăмпана, мăйăра е çут çанталăк сулхăнĕнче кану ирттерме йышлăн тухма пуçларĕç. Вĕсем вăрманта пирус турттни, канăва йĕркеленĕ май вучах чĕртни час-час пулакан йĕркесĕрлĕх. Çакă «хĕрлĕ автана» çул уçакан сăлтав пулни пирки вăрмана тухаканăн манас марччĕ. Атте-асаттесем лартса ӳстернĕ вăрман пирĕн ачамăрсемпе мăнукăмăрсемшĕн те упранса юлтăрччĕ.

Çакнах йывăç касакансем пирки те асăрхаттармалла. Ирĕк илмесĕр йывăç касакансем, сире çак ĕçшĕн 5 пин тенкĕрен пуçласа штраф тата вăрмана пысăкрах сăтăр кӳнишĕн ирĕкрен хăтарма пултарни пирки ан манăрччĕ.

**В. НИКОЛАЕВ,**
**Ильинка лесничествин участок мастерĕ.**